27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮНЬ 28 ЮНКУН 127(6622) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтăн çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, паян, июнĕн 27-мĕшĕнче, фронтран атака тунипе пĕр вăхăтрах аякран хупăрласа илмелли маневрсем туса çапăçнă хыççăн, пысăк чугун çул узелне, Минск енчи нимĕçсен оборонин хăватлă бастионне — ОРША хулине туртса илнĕ.

ОРША хулине илессишĕн пынă çапăçусенче ГАЛИЦКИЙ генерал-лейтенантăн, ГЛАГОЛЕВ генерал-лейтенантăн, ШАФРАНОВ генерал-майорăн, РЫЖИКОВ генерал-майорăн, ПЕТЕРС генерал-майорăн, КОШЕВОЙ генерал-лейтенантăн, ПРОВАЛОВ генерал-майорăн, ОЛЕШЕВ генерал-майорăн, КОВТУНОВ полковникăн, КОВАЛЕВСКИЙ полковникăн, КЛИМАХИН полковникăн, БЕРЕСТОВ генерал-майорăн, ПОЛЕВИК полковникăн, СТРИЖЕНКО генерал-майорăн, ДЕМИН полковникăн, БОРОДКИН генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВĂН, артиллери генерал-майорĕн СЕМИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ПОПОВĂН, артиллери генерал-майорĕн БЕЛЯКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн САЗОНОВĂН, ПИЛИПЕНКО полковникăн, ФЕДОТОВ полковникăн, ХАСИН полковникăн, КИЙ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн БУРДЕЙНЫЙĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн НЕЦВЕТАЙЛĂН, БУРЛЫГА полковникăн, БУКОВ полковникăн, ЦИНЧЕНКО полковникăн, ЛУШПА полковникăн, ДАГЕЛИС полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн БЕЛЕЦКИЙĔН, авиаци генерал-лейтенанчĕн САВИЦКИЙĔН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УШАКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ГОРЛАЧЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БЛАГОВЕЩЕНСКИЙĔН, авиаци генерал-майорĕн ЗАХАРОВĂН, ПРУТКОВ полковникăн, ЗИМИН полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЗВЕРЕВĂН, ЗАХАРОВ полковникăн, ЦЕЛИЩЕВ подполковникăн, КРАВЧЕНКО майорăн, СЕМЕНОВ майорăн, ПРОНЕВИЧ полковникăн, ТРОЯНОВ майорăн, МАСЕНЗОН майорăн сапёрĕсем тата çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн БУРОВĂН, ДАВИДЕНКО полковникăн, БЕЛЫШЕВ полковникăн связисчĕсем уйрăмах чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăхах палăртса хăварас тесе, ОРША хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах палăрнă соединенисемпе чаçсене «ОРШАНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратăс.

Паян, июнĕн 27-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ОРША хулине илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн эсир ертсе пыракан çарсене, ОРША хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿсенче пуçне хунă геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июнĕн 27-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронтăн тата БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтăн çарĕсем тăшманăн ВИТЕБСК районĕнчи çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе çапăçнă, çавăрса илнĕ унка хĕссе пырса, Белоруссин пысăк область центрне, нимĕçсен хĕвеланăç енчи оборенин стратеги тĕлĕшпе паха узелĕ пулса тăракан ВИТЕБСК хулине штурмласа туртса илнĕ.

ВИТЕБСК хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, наступление ăнăçлă вăйлатса пырса, Витебск облаçĕнчи район центрне БЕШЕНКОВИЧИ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 700 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — УЛЛА хули, ОБОЛЬ, БОЧЕЙКОВО, КАМЕНЬЩИНА, АЛЕКСИНИЧИ, ЧЕРЕЯ ятлă пысăк ялсем тата ВИТЕБСК хулипе ПОЛОЦК хули хушшинчи чугун çул çинчи КНЯЖНИЦА, ОБОЛЬ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ОРША хули енче пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, Витебск облаçĕнчи район центрĕсене — ДУБРОВНО хулине, ТОЛОЧИН хулипе пысăк чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — СТАЙКИ, СМОЛЯНЫ, ОБОЛЬЦЫ, ПИЩАЛОВА (ОРША хулинчен 3 километр çурçĕререхре), СОЛОВЬИ, КАРАБАНОВИЧИ, СВАТОШИЦА, ЦЫБУЛЬСКАЯ ятлă пунктсем тата СТАЙКИ, ЮРЦЕВО, СМОЛЯНЫ, ЛЕМНИЦА ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ОРША хулипе БОРИСОВ хули хушшинчи шоссе çулĕпе чугун çула тата ОРША хулипе ЛЕПЕЛЬ хули хушшинчи чугун çула татнă.

МОГИЛЕВ хули енче пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла куçса пынă, тăшманпа çапăçса, Могилев облаçĕнчи район центрне ГОРКИ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 450 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — МАСАЛЫКИ, СЛОБОДА КАЗИМИРОВСКАЯ, СТАН, ТИМОХОВКА, РУДИЦЫ, РАЩЕВКА, ДУБРОВКА, БЕЛЬ, ПЛЕЩИЦЫ, ЕВДОКИМОВИЧИ, МОСТОК (Могилев хулинчен 10 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), МАШИНАКИ, ЗАРУДЕЕВКА, БОЛЬШИЕ АМХИНИЧИ, МАЛЫЕ АМХИНИЧИ, ГАРБОВИЧИ, ОСТРОВЫ ятлă пысăк ялсем тата ЧАУСЫ, БЛАГОВИЧИ, РЕСТА, ПОГОДИНО ятлă чугун çул станцийĕсем.

Пирĕн çарсем МОГИЛЕВ хулинчен çурçĕртерехре ДНЕПР шывĕ çине тухнă.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем, ăнăçлă наступлени туса пырса, нимĕçсен БОБРУЙСК енчи оборонин тĕренклетнĕ паха пункчĕ пулса тăракан ЖЛОБИН хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — Полесье облаçĕнчи район центрĕ — ПАРИЧИ хули, ОСОВНИК, БОЛЬШАЯ КРУШИНОВКА, МАЛАЯ КРУШИНОВКА, ФАЛЕВИЧИ, КОШАРЫ, ЗАБОЛОТЬЕ, СОЛОНОЕ, МОРМАЛЬ, ЗДУДИЧИ, КОЗЛОВКА, БРОЖА, РАТМИРОВИЧИ, ОЗЕМЛЯ, ЛОМОВИЧИ ятлă пысăк ялсем тата ЖЛОБИН-ПОДОЛЬСКАЯ, МОРМАЛЬ, БРОЖА, РАТМИРОВИЧИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ОНЕГА кÿллипе ЛАДОГА кÿлли хушшинче пирĕн çарсем Карело-Финн ССР-ĕн район центрне ОЛОНЕЦ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — КАРПОВКА, ЗИНИКОВО, КУЙТАЖИ, НАНУЛИЦА, СУДАЛИЦА, ЮКСИЛА, КОТЧИЛА.

ОНЕГА кÿллинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, МЕДВЕЖЬЕГОРСК хулинчен хĕвеланăçнелле тата кăнтăралла 30 километр таран малалла кайнă, КАРЕЛЬСКАЯ МАСЕЛЬГА, ЛОСИНАЯ ГОРА, МЕДВЕЖЬЯ ГОРА, ПЕРЕГУБА ятлă ялсене тата Мурманск чугун çулĕ çинчи УНИЦА, ТЯППЕСЕЛЬГА чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

Финн заливĕнче пирĕн çарсем КОЙВИСТО тата ТИУРИН-САРИ утравĕсене тăшманран пĕтĕмĕшпех тасатса пĕтернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Июнĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 28 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Паян Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронтăн тата Белоруссири 3-мĕш фронтăн çарĕсем Белоруссин область центрне Витебск хулине штурмласа туртса илнĕ. Ĕнер совет çарĕсем нимĕçсене хулан хĕвелтухăç пайĕнчен хăваласа кăларнă та, каç пулас умĕн Хĕвеланăç Двина шывĕ урлă каçса, хулан хĕвеланăç пайне штурмлама тытăннă. Пирĕн ытти чаçсем Витебска хĕвеланăçĕнчен вăркăнса кĕнĕ. Совет боецĕсем тăшманпа çĕрĕпех хаяррăн çапăçнă, гитлеровецсене пÿртсенчен, подвалсенчен тата тĕрлĕрен хÿтлĕхсенчен çапа-çапа кăларнă. Июнĕн 26-мĕшĕнче тул çуталса килнĕ тĕле Витебск хулине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Хула урамĕсенче тăшманăн 6.000 вилли ытла выртса юлнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Вăл шутра — 10 паровоз, çар пурлăхĕ тиесе лартнă 3 чугун çул составĕ, 1100 автомашина, темĕн чухлĕ хĕçпăшал тата боеприпассем. Халĕ трофейăсене шута илеççĕ. Нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ. Витебск хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем нимĕçсен группировкине çавăрса илнĕ унка хытăрах та хытăрах хĕссе пынă. Тăшман çав ункăран тухса тарма хăтланнисене пурне те ăнăçлă сирсе янă. Гитлеровецсене тыткăна нумай илнĕ. Совет çарĕсем, çав тери хăвăрт пырса çапса, нимĕçсен ункăри группировкине икĕ пая касса уйăрнă. Халĕ вĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкассишĕн çапăçаççĕ.

* * *

Витебск хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем Витебск облаçĕнчи район центрне Бешенковичи хулине виçĕ енчен çавăрса илнĕ те штурмласа туртса илнĕ. Грунт çулĕсен çав паха узелĕшĕн пулса иртнĕ çапăçура 1000 гитлеровецă ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн контратакисене сире-сире ярса, пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 700 пункта ытла йышăннă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Пĕр часть 6 танк, миномет батарейине тата икĕ артиллери батарейине тытса илнĕ.

* * *

Орша хули енче пирĕн çарсем, çав тери хăвăрт малалла куçса пырса, çурçĕр енчен Оршăран иртсе кайнă та халăх пурăнакан 400 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — грунт çулĕсен Обольцы тата Смоляны ятлă узелĕсем. Тăшман совет çарĕсене хушăри позицисенче тытса чарма хăтланать. Пирĕн çамăллăн куçакан чаçсем, çавăрса илмелли ăста маневрсем туса, тăшман тылĕсене кĕре-кĕре каяççĕ, унăн салтакĕсене пĕтереççĕ, унăн техникипе хĕçпăшалне пĕтере-пĕтере тăкаççĕ тата тыта-тыта илеççĕ. Нимĕçсем чылай участоксенче ним тĕлли-паллисĕр каялла чакаççĕ, хăйсен снаряженине, боеприпасĕсене тата çар пурлăхне пăраха-пăраха хăвараççĕ. Пĕр ялта пирĕн боецсем 300 автомашина, 3 боеприпас склачĕ тата йывăр тупăсем 30 ытла тытса илнĕ. Обольцы ялĕнче пирĕн утлă çар отрячĕсем, çав тери хăвăрт атакăласа, тăшманăн гарнизонне аркатса тăкнă, 30 автомашина тытса илнĕ тата 100 нимĕçе тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра совет подразделенийĕсем нимĕçсен пысăк отрядне çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă, 400 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Кун каçиччен çапăçусенче пирĕн чаçсем 14 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупа, тĕрлĕ калибрлă 90 тупă ытла, 212 пулемет, 246 автомашина, 500 лаша, тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Могилев хули енче пирĕн çарсем Могилевран çурçĕртерехри Днепр шывĕ çине тухнă, çапла вара Могилев хулипе Орша хули хушшинчи паха шоссе çулне татнă. Тăшманăн контратакисем ăнăçлă пулман. Совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе нимĕçсем питĕ пысăк çухатусем тÿсеççĕ, хĕвеланăçнелле чакаççĕ. Тыткăна нумай илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсем, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Жлобин хулине штурмласа туртса илнĕ. Нимĕçсем, малтанах хатĕрлесе хунă оборона позицийĕсемпе усă курса, умлăн хыççăн хаяр контратакăсем тăваççĕ. Пĕр соединени кун каçиччен тăшманăн 16 контратакине сирсе янă. Совет боецĕсем 2.000 гитлеровецă çити пĕтерсе тăкнă, 15 танк çунтарса янă. Пирĕн Рогачев хулинчен хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан чаçсем 900 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 3 танк тата хăй тĕллĕн çÿрекен 3 тупă тытса илнĕ. Совет летчикĕсем тăшманăн 13 самолетне персе ÿкернĕ.

Украинăри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Центральный Комитетне

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ Украинăн комсомолне вăл 25 çул тултарнă кун салам ярать.

Украинăри комсомолецсемпе комсомолкăсем чĕрек ĕмĕр хушши ĕнтĕ ленинла парти ертсе пынипе ĕçлеççĕ тата кĕрешеççĕ, Ленин хушса хăварнисене чĕрере таса сыхласа усраççĕ.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче Украинăн çамрăкĕсем Хĕрлĕ Çар ретĕсенче тата партизансен отрячĕсенче, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле тăрса, фашистла нимĕç пусмăрçисене хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çакна шанса тăрать: Украина çамрăкĕсем тата вĕсен малта пыракан отрячĕ — комсомол тăшмана пуçĕпех çапса аркатас, мĕнпур совет çĕрне нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех ирĕке кăларас тата фашистла мерзавецсем аркатса пĕтернĕ халăх хуçалăхне хăвăртрах юсаса ура çине тăратас ĕçе малашне те хăйсен мĕнпур вăйĕсене парса пырĕç.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çакна шанать: çамрăксене социализмлă Тăван çĕршывшăн шанчăклă пулма тата совет халăхĕшĕн пĕтĕм чун-чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентсе пырас тĕлĕшпе комсомол малашне те ленинла партин çывăх та тĕрĕс помощникĕ пулса тăрĕ.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (большевиксен) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Украинăри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзне Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Украинăри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕ 25 çул тултарнине палăртас майпа тата Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç активлăн кĕрешме Совет Украинин çамрăкĕсене организацилес тĕлĕшпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Украинăри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзне Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июнĕн 26-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

„Почетный донор СССР" ятлă кăкăр çине çакмалли знак тăвасси çинчен

Хĕрлĕ Çарăн аманнă боецĕсемпе офицерĕсен тата граждăнла халăхăн пурнăçĕсене çăлса хăварма хăйсен юнне паракан донорсене хавхалантарас шутпа, СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ çапла йышăнать:

1. Донорсем валли «Почетный донор СССР» ятлă кăкăр çине çакмалли знакăн образецне çирĕплетес.
2. «Почетный донор СССР» ятлă знак çинчен калакан Положение çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июнĕн 24-мĕшĕ.

„Почетный донор СССР" ятлă кăкăр çине çакмалли знак çинчен калакан Положени

1. «Почетный донор СССР» ятлă кăкăр çине çакмалли знакпа Хĕрлĕ Çарăн аманнă боецĕсемпе офицерĕсен тата граждăнла халăхăн пурнăçĕсене çăлса хăварма хăйсен юнне нумай хутчен панă çынсене тата çакăнпа пĕрлех халăха донорсен ретне явăçтарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлесе пынă çынсене наградăлаççĕ.
2. «Почетный донор СССР» ятлă кăкăр çине çакмалли знакпа — Хĕрлĕ Хĕрес тата Хĕрлĕ Çурçуйăх Обществисен Союзĕн Исполкомĕ, Хĕрлĕ Хĕрес тата Хĕрлĕ Çурçуйăх Обществисен республикăсенчи, крайсенчи, облаçсенчи, транспортри комитечĕсем тăратнă тăрăх, çавăн пекех тата СССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ, союзлă тата автономиллĕ республикăсенчи Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕсем, крайсемпе облаçсенчи сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсем тăратнă тăрăх, наградăлаççĕ.
3. «Почетный донор СССР» ятлă знака сылтăм кăкăр çинче, СССР орденĕсенчен аяларах çакса çÿреççĕ.

И. В. Сталин юлташ Э. Джонстон господина йышăнни

Июнĕн 26-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ США Суту-илÿ Палатин Председательне Э. Джонстон господина йышăннă. Калаçура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ тата США-н СССР-ти посолĕ В. А. Гарриман господин пулнă.

Гитлерла командовани çĕнĕрен жуликла хăтланни

Июнĕн 22-мĕшĕнче Совет Информаци Бюровĕ Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçин виçĕ çулталăкĕн вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи итогĕсене пичетлесе кăларчĕ. Çав пĕлтерÿре фашистла нимĕç çарĕсен Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче виçĕ çул хушшинчи вăрçăра 7 миллион та 800 пин салтакпа офицер вилсе пĕтнĕ е тыткăна лекнĕ, 70 пин танка çити, 60 пин самолет, 90 пин ытла тупă пĕтнĕ тесе каланăччĕ. Малалла Совинформбюро çапла пĕлтернĕччĕ: виçĕ çул хушшинчи вăрçăра Хĕрлĕ Çарăн 5 миллион та 300 пин çын вилсе пĕтнĕ, тыткăна лекнĕ е пĕр хыпарсăр çухалнă. Гитлеровецсем, çак тĕрĕс даннăйсене вараллама хăтланса, çурăлса каяс пек тăрăшаççĕ. Нимĕçсен верховнăй командованийĕ совет çарĕсен çухатăвĕсем çинчен фальшивка пичетлесе кăларнă. Берлинри жуликсем ытла та куç кĕретĕнех улталама хăтланаççĕ, вĕсем, пурне те ĕнентерме тăрăшса, çапла сăмахлаççĕ: «советсем пĕлтернĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çарăн 5 миллион та 300 пин çын вилнĕ» теççĕ. Берлинри шулерсем советсен пĕлтерĕвĕнчен илнĕ цитатăри «тыткăна лекнĕ е пĕр хыпарсăр çухалнă» текен сăмахсене юрнех сиктерсе хăварнă. Çакăн хыççăн вĕсем, намăса пĕлмесĕр, çапла калаççĕ: «советсем тыткăна лекнисен шутне кăтартман, вилнисем çинчен кăна пĕлтернĕ», теççĕ. Çакăнпа пĕрлех нимĕç командованийĕ çапла çирĕплетсе калама пăхать: «Германи аллине тыткăна лекнĕ совет çар çыннийĕсен шучĕ 5 миллион та 600 пин çынтан иртет», имĕш. Нимĕçсем «тыткăна лекнĕ çар çыннисене» мĕнле тунине пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать. Ĕнтĕ пĕррех кăна мар çакна кăтартса панă: нимĕç командованийĕн приказĕ тăрăх, нимĕçсен çар влаçĕсем советсен вăхăтлăха оккупациленĕ территорийĕнчи мирлĕ совет гражданĕсене, вăл шутра хĕрарăмсемпе ачасене те, тытса лагерьсене хăваласа каяççĕ те вĕсене вара тыткăна лекнĕ çар çыннисем шутне кĕртеççĕ. Ĕнтĕ çавăн пек майпа «тыткăна лекнĕ çар çыннисем», анчах çапăçу хирĕнче мар, хăйсен пÿрчĕсенчен тытса кайнăскерсем, халĕ нимĕçсен нумай тĕрлĕ концентрациллĕ лагерĕсенче асапланаççĕ, вĕсен шучĕ 5 миллион та 600 пин çын кăна мар, унтан нумай иртсе кайнă.

Совет çарĕсен çухатăвĕсем çинчен çавăн пек ăссăр та суя цифрăсем пĕлтерсе, нимĕç командованийĕ хăйĕн çухатăвĕсем çинчен нимĕн те шарламан. Гитлер шайкки чăнлăхран вутран хăранă пек хăрать, вăл нимĕç çарĕ çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче тÿснĕ çав тери пысăк çухатусене пур майпа та пытарса хăварма тăрăшать. Миçе миллион нимĕç салтакĕпе офицерĕ Хĕвелтухăçĕнче пурăнмалли вырăн мар, вилĕм вырăнĕ тупни çинчен, вĕсене миçе миллионшарăн совет çĕршывĕнче пытарни çинчен, нимĕç çарĕ танксем, самолетсем тата тупăсем темиçе вуншар пинĕн çухатни çинчен нимĕç командованийĕ Германи халăхне пĕлтерме хăраса тăрать. Гитлеровецсем çапăçу хирĕнче пĕр сражени хыççăн тепĕр сраженире аяла пулса пыраççĕ. Ун вырăнне вĕсем хăйсене хăйсем суялăхпа фальшивкăсен тата ултавлă ĕçсен никам ситеймни мастерĕсем пулса тăнине кăтартрĕç.

СОВИНФОРМБЮРО.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ.

Верховный Главнокомандующине Совет Союзĕн Маршалне СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿллĕ наступлени туса пынипе хавасланса, эпĕ 1942 çул вĕçĕнче тата 1943 çулхи февраль уйăхĕнче танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 105.000 тенкĕ тата оборона фондне 178 пăт тырă паттăм.

Сирĕн саламăра илни, эсир пирĕн «Марс» колхоз колхозникĕсемпе колхозницисене тата мана хама тав туни пире çĕнĕ вăй-хăват парать, вара эпир колхозра фронта пулăшассишĕн татах та хастаррăх ĕçлеме тытăнтăмăр.

Çине тăрса ĕçленипе эпир 1943 çулта тухăçлă тырпул туса илтĕмĕр. Колхозниксем хăйсем перекетленĕ тырра государствăна кооперации урлă 10.000 пăт ытла сутрĕç. Государствăн виççĕмĕш Военнăй Заемне 500.000 тенкĕлĕх ытла çырăнса укçине çийĕнчех тÿлерĕç.

Кăçал суракине срокчен пысăк пахалăхпа туса ирттертĕмĕр, суракин планне 110 процент тултартăмăр.

«Марс» колхоз колхозникĕсем, хамăр Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсем пулса, фронтшăн вăй-хăвата шеллемесĕр тăрăшса ĕçлеççĕ.

Эпĕ, «Марс» колхоз председателĕ пулса, пĕр улшăнмасăр 14 çул хушши ĕçлетĕп. Хамăн сывлăх начар пулни кăна мана Отечественнăй вăрçă фронтĕнче пулма, нимĕç ирсĕрĕсене хамăн алăпа пĕтерсе пыма чăрмантарать.

Гитлерла захватчиксене хăвăртрах аркатса тăкас ĕмĕтпе çунса, хамăн ĕçри юлташăн Ферапонт Головатый колхозникĕн примерĕпе, пĕр боевой самолет — истребитель туянма шутларăм. Самолет илме перекетленĕ укçăран 110.000 тенкĕ хыврăм.

Хам туяннă самолета сталинла сокола Совет Союзĕн Геройне Кочетов юлташа пама ирĕк ыйтатăп.

Хисеплĕ Иосиф Виссарионович! Сире Совет Союзĕнчи халăхсен телейĕшĕн нумай çулсем хушши ĕçлесе пурăнма чĕререн сывлăх сунатăп.

Чăваш республикинчи Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ Абдул Гаязович ГАЯЗОВ.

Чăваш АССР-ĕ, Елчĕк районĕнчи „Марс" колхоз

Колхоз председательне Абдул Гаязова

Хĕрлĕ Çарăн сывлăшри вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн манран тăванла салам тата Хĕрлĕ Çар тав тунине йышăнăр.

Эсир кăмăл туса ыйтни пурнăçа кĕрĕ.

И. СТАЛИН.

Çулпуçăн саламлă сăмахĕсем çĕнĕ вăй-хăват кĕртеççĕ

(„Крестьянин" тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсенче пулса иртнĕ митингсем)

МУРКАШ. (Хамăр корр., телефонпа). Аталай ялсоветĕнчи «Крестьянин» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем Хĕрлĕ Çар валли боевой техника илсе пама 50-шар пин тенкĕ укçа хыврĕç. Вĕсем Сталин юлташран саламлă телеграммăсем илчĕç. Çав ятпа колхозсенче савăнăçлă митингсем пулса иртрĕç.

— Сталин юлташ пирĕн ĕçе пысăка хурса хакларĕ, — терĕ Свердлов ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Т. Налимов юлташ митингра, — вăл пире саламларĕ, Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав турĕ. Юратнă çулпуçăн сăмахĕсем пире çĕнĕ вăй-хăват кĕртеççĕ, тата тимлĕрех ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Сталин юлташăн саламлă телеграммисем çине ответлесе, «Крестьянин» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсенчи ĕçченĕсем çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

Çăрмне сухине июнĕн вĕçĕ тĕлне туса пĕтермелле, утă çулма малах тухса, ăна июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çулса пĕтермелле, июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех капана хывса пăрахмалла;

çурхи тырăсене çумкурăкĕсенчен иккĕмĕш хут тасатса тухмалла;

уйхирти мĕнпур тырпула кăçал 19 ĕç кунĕнче вырса пухмалла, уборка ĕçĕсене районра чи малтан тĕплĕн вĕçлемелле. Кашни гектартан вăтамран 13 центнертан кая мар тĕштырă, 100 центнер çĕрулми, 120 центнер пахча-çимĕç ÿстерсе илмелле.

«Крестьянин» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем яланах пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Иккĕшĕ те вĕсем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсемпе районра малти ретре пыраççĕ. Суракине вĕсем 8 кун хушшинче туса ирттерчĕç. Халĕ тырăсене çумкурăкĕсенчен пĕрер хут тасатнă. Утă çулма тата тырă вырма тухма хатĕрленсе çитрĕç. Уборка машинисене юсанă, çавасене туптанă, çурласене шăланă. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма та ку колхозсенче тимлĕн хатĕрленеççĕ. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз çак кунсенче 40 тонна силос хыврĕ, вăл кăçал тата 25 тонна силос хывса хăварать.

Т. ИВАНОВ.

Иван Данилович Черняховские çар званийĕ — арми генералĕн ятне парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Иван Данилович Черняховские СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званийĕ—арми генералĕн ятне парас.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июнĕн 26-мĕшĕ.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Агротехникăна пăсаççĕ, сÿрĕк ĕçлеççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем çĕртме сухине тăрăшса тăваççĕ. Красин ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Школьникова юлташ) çĕртме сухине лайăх тăваççĕ, сухаланă хыççăнах сÿресе пыраççĕ. Комсомолец Д. Куймаков кăтартуллăн ĕçлет. 16 сантиметр тарăнăшĕ сухаласа, вăл ĕç нормине ирттерсе тултарать. Çавăн пекех С. Куймаков та кулленех 1,17-шер гектар сухалать.

Колхозри агитаторсем Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Республикăри колхозсенче çĕртме тăвасси çинчен» йышăннă постановленине кашни колхознике тĕплĕн ăнлантарса панă. Малтанлăха çĕртме пахалăхĕ тивĕçлĕ выранта марччĕ. Çăмăхран, Г. Скворцова юлташ ăшăх, шăйрăклă сухаланă. Колхозри агротехник Дерягин юлташ çамрăк сухаçăна Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çĕртме сухи тăвасси çинчен йышăннă постановленине ăнлантарса панă, плугне майлаштарса лартма пулăшнă. Çавăн хыççăн Скворцова юлташ çĕртме сухине пысăк пахалăхпа тăвать.

Анчах нумай колхозсенче çĕртме тунă чухне агротехникăна пăсаççĕ-ха. «Мотор» колхозра (председателĕ Хосянов юлташ) 6—7 гектара шăйрăклă, ăшăх сухаланă. Çамрăк сухаçă Гибатдинов юлташ 5 сантиметр тарăнăшĕ çеç сухалать. Колхозра старши сухаçă та, пахалăх инспекторĕ те çук. Бригадир Хайруллин юлташ уйра, сухаçăсем патĕнче пулмасть.

Эпир Комсомольски районри 10 колхозра пултăмăр. Пур çĕрте те тенĕ пекех сухаланă хыççăн çийĕнчех сÿрелесе пымаççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозра çĕртме сухине сÿрелемеççĕ, ĕç пахалăхĕ те начар. «Заветы Ильича» колхоз çурхи ĕçсене те япăх тунă, аçасем çинче шăйрăксем пур, çавна пула çумкурăкĕ тапса тухнă. «Заветы Ильича» колхоз çак вăхăта çитсе те çĕртме сухине тума тытăнман.

Çĕртме тăвас ĕçри çак çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Малта пыракан трактористсем преми илеççĕ

Çĕрпÿ МТС-ĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ 10-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Т. Степанов юлташ) тракторсемпе тумалли ĕçсен çулталăкри планне республикăра чи малтан тултарчĕ, 1900 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

Степанов юлташ ертсе пыракан бригадăри трактористсем, çавăн пекех тата çураки вăхăтĕнче лайăх ĕçленĕ ытти трактористсем те 12.670 тенкĕ премии илнĕ. МТС-ри трактористсемпе трактористкăсен çак кунсенче пулса иртнĕ пухăвĕнче Степанов юлташ çулталăкри плана 200 процент тултарма обязательство илчĕ, МТС-ри ытти бригадăсене те çавăн пек ĕçлеме чĕнчĕ.

Выльăхсем валли апат хатĕрлетпĕр

Вăрмар районĕнчи колхозсем иртнĕ хĕлле выльăх апачĕ çитменнине пула пысăк йывăрлăхсем тÿссе ирттерчĕç. Çав йывăрлăхсем малалла ан пулччăр тесе, кунта выльăх апатне халех хатĕрлеме тытăнчĕç. Чупайри «Дружба» колхоз выльăхсем валли 283 центнер витаминлă апат хатĕрленĕ. Клевера тата ытти курăксене çулса типĕтеççĕ те вакласа хураççĕ. Унсăр пуçне, 350 центнер вĕлтрен, 1920 центнер витаминлă апат хатĕрленĕ.

«Заря» колхозра та (председателĕ Лебедева юлташ) ку тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. «Большевик» колхозра (председателĕ Игнатьев юлташ) 65 центнер вĕлтрен, 9 центнер арăмути пухса типĕтнĕ. «Новая жизнь» колхозра 8 центнер витаминлă апат—утă çăнăхĕ хатĕрленĕ, 32 центнер вĕлтрен пухнă. Ку ĕç кашни колхозрах анлăн сарăлса пырать. Районĕпе пурĕ 1920 центнер витаминлă апат хатĕрленĕ.

Паянхи кун тĕлне силос хывма 60 шăтăк тата 20 ытла траншея хатĕрленĕ. Силос хывас ĕçе чылай колхозсенче тытăннă та ĕнтĕ.

И. САПАРКИН,
Çĕрпÿ пайĕн пуçлăхĕ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Телефонпа). Районри колхозсем, «Мурат» колхоз пуçарăвĕпе, хай тĕллĕн ÿсекен курăксене выльăхсем валли пухса типĕтес ĕçе хĕрÿллĕн тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне районĕпе 341,0 тонна вĕлтрен, 68,0 тонна арăмути пухса типĕтнĕ. 290 тонна силос хывнă.

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Районри чылай колхозсенче ферма работникĕсем выльăхсем валли апат-çимĕç хатĕрлеме тытăнчĕç. Çак кунсенче Андреев ячĕпе тăракан колхозăн фермисенче ĕçлекенсем 45 тонна, «Красная Чувашия» колхозра —75 тонна, «13-й год Октября» колхозра—40 тонна силос хывнă. Кунсăр пуçне, çав колхозсенчи фермăсен работникĕсем кашниех пĕрер центнер çамрăк курăксем тата вĕлтрен типĕтсе хатĕрлеме пулчĕç.

Выльăхсем валли çителĕклĕ таран апат хатĕрлесси хальхи вăхăтра тимлĕн ĕçленинчен килет. Анчах та хăшпĕр колхозсем çак ĕçе тума васкамаççĕ. «Ударник», «Коминтерн» тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсем çулсеренех выльăх апачĕ çитменнипе пысăк йывăрлăхсем тÿсеççĕ. Апла пулин те çав колхозсем выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе сÿрĕк ĕçлеççĕ.

И. ШАРКОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Янмурзино», «Малалла» колхозсем çĕртме туса пĕтерчĕç, ку ĕç ытти колхозсенче те ăнăçлă пырать. «Свобода», Буденный ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те утă çулаççĕ. Районри комсомолецсемпе çамрăксем воскресник туса ирттерчĕç. Çак воскресникре 473 тонна силос хывнă.

Силос хывас ĕç уйрăмăнах Мартынкассинчи Молотов ячĕпе тăракан тата «Дружепник» колхозсенче аван пырать. Вĕсем 60-шар тонна хывнă та ĕнтĕ. «Пятилетка» колхоз 35 тонна, Красноармейскри «Победа» колхоз 28 тонна силос хывнă.

Утă çулаççĕ

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Тăрăн ялсоветĕнчи «МОПР», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем, Анаткас Марка ялсоветĕнчи «Правда», «Красноармеец» колхозсем утă çулма тытăнчĕç. «Правда» колхоз 4 гектар, «Красноармеец» колхоз 6,5 гектар çулнă.

«Правда» колхозра силос хывас ĕç те хĕрсех пырать. Паянхи кун тĕлне 21,5 тонна хывнă. Силоса ятарласа тунă комисси акт çырса йышăннă. Колхозниксем 193 гектар тырра çумкурăксенчен тасатнă, халĕ çĕрулми çумлаççĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхозра Спиридонов юлташ утă çулма кирлĕ çавасене пĕтĕмпех туптаса хунă, çурласене те шăлласа пĕтернĕ.

Агроном Г. СЕРЕБРЯКОВ.

ШĂХАСАН. Районри колхозсенче Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Выльăх-чĕрлĕхе хĕл касăрмашкăн апат тата суртпĕр хатĕрлесе хурасси çинчен» йышăннă постановление сÿтсе-яваççĕ, ăна пурнăça кĕртме хăйсем çине татăклă обязательствăсем илеççĕ.

Матьшури «Молодой колхозник» колхоз çак кунсенче 19,5 гектар çинчи люцернăна çулса, типĕтсе капана хыврĕ. Колхоз кăçал люцернăна çаран утисене иккĕмĕш хут çулса илме шутлать. Чăрăшкассинчи «Соревнование» колхоз 27 гектар улăх утине çулса пухрĕ; кунта та утă çулнă участоксем çинчи курăка тепĕр хут çитĕнтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ: улăха выльăхсене кĕртмеççĕ, шыв çĕмĕрсе каясран сыхланаççĕ.

Утă çулма çак кунсенчех «Красный партизан», «Прожектор», «Новая жизнь», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем те тытăнаççĕ. Паян утă çулма Киров ячĕпе тăракан, «Активист» колхозсем тухрĕç.

В. ВЕСЕЛОВ.

Суту-илÿçĕсем лапатка сутмаççĕ

Çĕмĕрле районĕнчи «Волга» колхоз çуракине ăнăçлăн ирттернĕ хыççăн суртпурисене çумкурăксенчен тасатма тытăнчĕ. Халĕ вĕсене пĕр хут çумланă ĕнтĕ.

Паянхи кун тĕлне тата 3.000 лав ытла тислĕк кăларнă. Тислĕке сапатнă хыççăнах 3 плугпа сухаласа пыратпăр. Тепĕр ик-виçĕ кунтан çĕртме туса пĕтеретпĕр.

Утă çулмалли вăхăт çывхарса çитрĕ. Пирĕн кăçал 40 гектар ытла утă çулса илмелле. Колхозра пĕр сенокосилка пур. Вăл юсавлă. Сенокосилкăпа çулма ĕлкĕрейменнине пĕтĕмпех çавасемпе çулмалла пулать. Çавасене те туптанă, анчах та районри суту-илÿ организацийĕсен магазинĕсенче пĕр лапатка та çук. Халĕ колхозниксене лапаткасем шырама кÿршĕри районсене ямалла.

Çак кунсенче эпир, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн «Выльăх-чĕрлĕхе хĕл касăрмашкăн апат тата суртпĕр хатĕрлесе хурасси çинчен» йышăннă постановленине сÿтсе-явса, вăл постановление пурнăçлас тĕлĕшпе конкретлă обязательствăсем илтĕмĕр. Выльăхсем валли çителĕклĕ апат хатĕрлес тесе, эпир вăрманти уçланкăсенче кăна мар, уйрăм пĕчĕк вырансенче те утă çулса пухма тытăнтăмăр.

Пирĕн колхозра 1939 çултанпах курăйăлтăрккă тилĕсен фермиĕ пур. Унта халь 20 тилĕ. Кăçал тата 25 пуç ÿсмелле. Çавна шута илсе, фермăри клеткăсене нумайлатма йышăнтăмăр. Пралук, тимĕр пăта тата ытти материалсене пире «Заготживсырье» кантурĕ памалла. Анчах вăл пире кирлĕ таран пулăшса пыраймасть-ха.

Т. ФЕДОТОВА,
«Волга» колхоз председателĕ.

Витесене юсаççĕ

ЕЛЧĔК. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн «Выльăх-чĕрлĕхе хĕл касăрмашкăн апат тата суртпĕр хатĕрлесе хурасси çинчен» йышăннă постановленине кашни колхозрах сÿтсе-яваççĕ. «Красный восток» тата «Журавлевка» колхозсенче çĕнĕрен 50-шар пуçлăх сысна витисем тăваççĕ. Çак кунсенчех «Пахарь» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче те витесене юсама тытăнаççĕ.

В. НЯГИН.
Райçĕрĕç пайĕн техникĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен районсенчи пухăвĕсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) Обкомĕн XIX пленумĕн итогĕсем çинчен парти райкомĕн секретарĕ Григорьев юлташ доклад турĕ. Вăл районри колхозсемпе предприятисен ĕçĕсене тĕплĕн сутатса пачĕ.

Районри колхозсем çуракине ăнăçлăн туса ирттернĕ. Çураки планне пур культурăсем тăрăх та ытлашшипех тултарнă. Нумай колхозсем çĕртме тăвас, тырпула пăхса ÿстерес, уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлеççĕ. Анчах, пĕтĕмпех илсен, уборкăна хатĕрленесси çителĕксĕр пырать-ха.

Доклад тăрăх прение 11 çын тухса каларĕç.

Пухура колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене палăртса, çурăм колхозсен руководителĕсене хытă критикăларĕç.

Çавăн пекех пуху районри предприятисемпе промысла артелĕсем çителĕксĕр ĕçленипе палăртрĕ.

Коммунистсен районри пухăвĕ колхозсемпе предприятисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мероприятисем палăртса хăварчĕ.

* * *

КУСЛАВККА, июнĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). ВКП(б) Обкомĕн XIX-мĕш пленумĕн итогĕсене сÿтсе-явас ыйтупа пулса иртнĕ районри парти активĕн пухăвĕнче 140 çын ытла пулчĕ.

Докладчик, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Крючков юлташ, районри колхозсем çуракине ăнăçлăн ирттерсе, планран ытлашши 266 гектар акни çинчен тата колхозсене МТС пысăк пулăшу пани çинчен пĕлтерчĕ. МТС çуракинче тумалли ĕçсен планне 130 процент тултарнă.

Малалла докладчик промышленность предприятийĕсен ĕçĕсем çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ. 1943 çулта республикăна тата района пăхăнса тăракан предприятисем те, промысла артелĕсем те хăйсен планне ăнăçлăн тултарнă. Анчах кăçал иртнĕ çулхи çитĕнÿсене малалла ÿстерсе пырайман. Хăшпĕр предприятисем, сăмахран, известь тăвакан завод, «Комсомолец» артель 5 уйăхри плана 30 процент таран çеç тултарнă.

Пуху çавăн пекех тата районра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çителĕксĕр пынине палăртрĕ.

Пуху, Обком пленумĕн решенийĕсене пурнăça кĕртмелли мероприятисем палăртса хăварчĕ.

* * *

МУРКАШ, июнĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Июнĕн 25-мĕшĕнче коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху икĕ ыйту: кăçалхи çураки итогĕсемпе уборкăна хатĕрленесси тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе-яврĕ.

Малтанхи ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ В. Ильин юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик тата тухса калакансем çакна палăртрĕç: чылай йывăрлăхсем пулнă пулин те, районри колхозсем кăçалхи çуракине ăнăçлăн ирттерчĕç. Район çураки планне майăн 30-мĕшĕ тĕлне 101,5 процент тултарчĕ.

Çав вăхăтрах çĕрулми лартмалли плана 8 процент тултарман, кантăр планпа пăхнинчен 64 гектар сахалтарах акнă, чылай колхозсенче нумай çул ÿсекен курăксене хаклаймасăр курăнать. Районри 72 колхозран 42-шĕ çав курăксене пачах та акман.

Иккĕмĕш ыйтупа пуху райсовет исполком председателĕн Г. Федоров юлташăн докладне итлерĕ.

Районра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç начар пырать. 1944 çулта государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕнесем енĕпе 75,5 процент, сыснасем енĕпе—62 процент, сурăхсем енĕпе—81,7 процент, качака-кĕшĕк енĕпе — 61 процент çеç тултарнă. Нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана иртнĕ çулта тултарнине лăпланса ларнă, кăçалхи плана тултарас тĕлĕшпе питĕ сÿрĕк ĕçлеççĕ. Çуркунне выльăх апачĕсем çителĕксĕр пулнă тата выльăхсене начар пăхнă пирки, вĕсен йышĕ чылай чакнă. Уйрăмăнах çамрăк выльăхсем нумай вилнĕ.

Коммунистсен районри пухăвĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сывăх вăхăтрах çĕклеме кирлĕ мероприятисем палăртса хăварчĕ.

Артель правленине пултарулла çынсене суйларĕç

(Промартелĕн отчетпа суйлав пухăвĕнчен)

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Çак кунсенче «Стрела» промартельте отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху артелĕн вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсем çинчен сÿтсе-яврĕ тата правлени составне суйласа хăварчĕ.

Артель отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче ĕççыннисем валли кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларассине çултан çулах ÿстерсе пынă. Çапла, иртнĕ çулта 1942 çулхинчен ытларах 193.612 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Çав вăхăтрах артель ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Пĕр çитменлĕх вăл — продукци туса кăлармалли плана пур таварсем тăрăх та тултарманни пулать. Артельте учетпа отчет ĕçне йĕркеленмен.

Артель членĕсем, артеле ертсе пыма правлени тата ревизи комиссине ĕçре палăрнă, пултарулла çынсене суйласа хăварчĕç.

Г. ЕРИСОВ.

„Вырăссен наступленийĕ вăрçăн çĕнĕ тапхăрне уçса парать"

Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ наступленийĕ çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркра тухса тăракан хаçатсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерÿллĕ çĕнĕ наступленийĕ çинчен калакан хыпарсене чи курăнмалли выранта пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат хăйĕн умстатьинче Хĕрлĕ Çарăн командованине питĕ пысăка хурса мухтать, вăл çапла çырать: вырăссен наступленийĕ вăрçăн çĕнĕ тапхăрне уçса парать. Хĕрлĕ Çар халĕ гитлерла Германин пурнăçне хăратса тăрать, тесе палăртать хаçат.

«Нью-Йорк таймс» хаçат Хĕрлĕ Çар наступленин малтанхи кунĕсенчех тунă пысăк çитĕнÿсене палăртса çапла çырать: «Гитлера çав тери хăратакан тимĕр ункă Германи тавра хĕсĕнсех пырать. Çитес çапăçусем тем пек йывăр пулма тата вăрахха кайма пултараççĕ пулин те, эпир ĕнтĕ Европăри вăрçăн юлашки тапхăрне кĕтĕмĕр».

«Ивнинг стар» хаçат Хĕрлĕ Çарăн наступленине «вăрçăн историллĕ событийĕ» тесе хак парать.

Американецсен Англири радио передатчикĕ Хĕрлĕ Çарăн çапăçури çĕнĕ çитĕнĕвĕсем çинчен ятарласа уйрăм передача панă. Американецсен Лондонри радиообозревателĕ çапла каланă: «Сталин çĕнĕ наступлени тума Белоруссри фронтне суйласа илнĕ, нимĕçсем кунти выранă никам çĕнтерме пултарайман бастион тесе мухтанчĕç». «Витебск хулине икĕ кун хушши çапăçнă хыççăнах пĕтĕмĕшпех çавăрса илчĕç. Пирĕн хĕвелтухăçĕнчи союзник тăшмана умлăн-хыçлăнах йывăррăн пыра-пыра çапать», — тет радиообозреватель.

ЛОНДОН, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Англи хаçачĕсем Хĕрлĕ Çарăн çуллахи наступленийĕ çинчен пĕлтерекен хыпарсене чи курăнмалли вырансенче пичетлесе кăларнă. «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат хăйĕн редакцирен çырнă статьинче çапла палăртать: Совет Союзĕпе Германи вăрçи тăваттăмĕш çула кĕнĕ çуллахи кунсенче нимĕç çарĕ наступлени тума пачах та пултараймарĕ, пуçару каллех вырăссен аллинче. Нимĕçсем аптăраса ÿкнĕ, вĕсем, хăйсене çĕнĕрен хăш енчен пырса çапассине пĕлесчĕ тесе, пуçĕсене çĕмĕреççĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксем Шербур патĕнчи чи çÿллĕ выранă туртса илнĕ, вĕсем мăйĕпен Шербур хули хĕррине сăрхăнса кĕрсе пыраççĕ. Тăшман хытă хирĕç тăрать, анчах та пирĕннисем пĕр пăрăнмасăр малалла куçса пынине вăл чарма пултараймасть.

Паян кăнтăрла Шербур районĕнчи объектсем çине союзниксен çар карапĕсем перĕ. Тĕллĕн-тĕллĕн атакăласа, пирĕннисем хаяр çапăçусем хыççăн плацдармăн хĕвелтухăç секторĕнче хăйсен позицисене лайăхлатнă. Авиаци, сывлăшран бомбăсем пăрахса, çĕр çинче çапăçакан çарсене пысăк пулăшу панă.

Тăшмана çапăçу районĕсем патнелле куçса пыма чăрмантарса, пирĕн истребитель-бомбардировщиксем паян чылай чугун çул объекчĕсене атакăланă.

Тăшман авиацийĕ активлăн кĕрешме пуçланă. Пĕринче нимĕç истребителĕсен соединенийĕ çапăçу пуçласа янă, нимĕçсен 9 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 7 самолет хăйсен базисене каялла таврăнман».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Шербура ирĕке кăларасси сывхарса пырать. Союзниксен çарĕсем хула урамĕсенче çапăçаççĕ, вĕсем ĕнер кăнтăрла иртсен тинĕс хĕррипе хĕвелтухăçĕнчен порт патнелле пĕр мильăна çити çывхарса пынă. Кун каçиччен хаяр çапăçу пынă, çапăçава тинĕс артиллерийĕ пулăшса тăнă, тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕсене пĕрин хыççăн теприне пĕтерсе-пĕтерсе тăкнă. Союзниксен çарĕсем хулана пĕр вăхăтрах нумай çĕртен кĕрсе кайнă. Тăшманăн тулти оборонин ытти участокĕсене тăшманран тасатаççĕ. Хĕвелтухăç секторĕнчи Фонтонэ районĕнче пирĕн çарсем çаплах малалла куçса пынă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Сент Онорин çывăхĕнче тăшманăн çĕнĕ контратакисене сире-сире янă.

Июнĕн 25-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен тата каçхине пирĕн авиаци тăшманăн снабжени базисене тата унăн çулйĕрĕсене тапăннă, çавăн пекех тата Шербура атакăлакан тип çĕр çинчи çарсене, тинĕс çар вăйĕсене тÿрремĕнех пулăшса тăнă».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Итали фронтĕнче союзниксен çарĕсем тăшмана çаплах хĕссе пынă, нумай вырансенче малалла куçнă. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем порт пулса тăракан Пьомбино хулине (Ливорно хулинчен 80 километр кăнтăртарахра) туртса илнĕ. Бронетанковăй колоннăсем чылай малалла кайнă, хальхи вăхăтра вĕсем Гроссетопа Иена хушшинче çурçултан ытла малалла куçнă. Американецсен 5-мĕш армийĕнчи француз чаçĕсем Омброне шывĕнчен хĕвеланăçнелле куçнă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕнчи Кăнтăр Африка, Англи тата Инди чаçĕсем тăшманăн арьергардри позицийĕсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкаççĕ, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Разведка тăвакан бронетанковăй чаçсем тăшмана Фолиньоран çурçĕр-хĕвелтухăçнелле сире-сире ывăтаççĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах союзниксен çарĕсен ытти чаçĕсем Кьети шывĕ урлă каçнă.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, кăнтăр Францие тапăннă.

Çанталăк начар тăни тактикăллă авиаци ĕçне кансĕрленĕ. Иртнĕ çĕр çăмăл тата йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Будапешт хулинчи объекчĕсене тапăннă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ВЕНА ХУЛИ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

ЛОНДОН, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Германин Гомберг хулинчи (Дуисбург хулинчен темиçе миля çурçĕрхĕвеланăçнерехре) промышленность объекчĕсене тапăннă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июнĕн 25-мĕшĕнче каçхине Америка авиацийĕ Парижран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри кĕперсем çине, çавăн пекех тата аэродромсем çине (вăл шута Бретиньири тата Виллакублэри аэродромсем те кĕреççĕ) бомбăсем пăрахнă.

АЛЖИР, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио çапла пĕлтернĕ: паян союзниксен авиацийĕн 750 бомбардировщикĕ Вена хулине тапăннă.

БОЛГАРИ ЧУГУН ÇУЛЕСЕН ПУÇЛĂХĔСЕНЕ ТАСАТНИ

СОФИЯ, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарире чугун çулсен, почтăпа телеграфăн управленийĕсенче ертсе пыракан çынсене нумай улăштарса пĕтернĕ. Чугун çулсен, пристаньсен тата движени службин главнăй дирекцийĕн эксплоатаци директорне вырăнтан кăларнă, çавăн пекех ытти тĕрлĕ службăсен 15 пуçлăхне вырăнтан кăларнă.

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕн итогĕсем

ВЦСПС-па ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ йышăннă тăрăх, майăн 28-мĕшĕпе июнĕн 11-мĕшĕ хушшинче комсомолпа профсоюзăн çуллахи кросĕ пулса иртрĕ. Икĕ эрне хушши пынă массăллă ăмăртура комсомолецсемпе çамрăксем, хăйсем гранатăна инçене ывăтма, тикĕс мар вырансенче хăвăрт чупма вĕренсе çитнине палăртрĕç.

ВЛКСМ Обкомĕ палăртнă тăрăх, кроса пĕтĕмпе 104.557 çын хутшăннă. Вăл шутра комсомолецсем — 20.431 çын, профсоюз членĕсем — 22.041 çын, ФЗО тата чугун çул училищинче вĕренекенсем—1.557 çын, колхозниксем—24.134 çын. Çакă вăл профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне халăх анлăн хутшăннине кăтартать. Участниксенчен 90 проценчĕ ГТО тата БГТО нормисене панă.

Комсомолăн чылай организацийĕсем, ку тĕлĕшпе политикăлла-массăллă ĕçе анлăн сарса пырса, ĕçе лайăх организациленĕ. Çавна пула вĕсем лайăх результатсем пачĕç. Комсомолăн районсенчи организацийĕсенчен ăмăртура малти вырăнсене Етĕрне, Куславкка, Çĕмĕрле, Çĕрпÿ районĕсенчи организацисем йышăнчĕç. Комсомолăн Шупашкар, Канаш тата Улатăр хулисенчи организацийĕсем те малти ретре шутланаççĕ.

Анчах та Кувакино, Пăрачкав, Шăхасан, Чурачăк, Йĕпреç райкомĕсем çак ăмăртăва начар ертсе пычĕç. Хăшпĕр организацисем кросă пачах та хатĕрленмен. Çавăнпа вĕсен результачĕсем те начар.

Спорт ĕçĕ ял çамрăкĕсен кулленхи йăлине кĕтĕр тесен, комсомол организацийĕсен чылай тăрăшса ĕçлемелле-ха. Иртнĕ çулсенчи опыт хăшпĕр комсомол организацийĕсемпе спорт обществисем, профсоюзпа комсомол кросне сезонлă кампани выранне шутласа, цифрăсемпе тата лайăх результатсем илнипе лăпланса ларнине палăртрĕ. Çакăн хыççăн вара вĕсем çамрăксене çуллахи спорт ĕçне урăх явăçтарман та.

Тĕрĕслесе илсен, çуллахи крос хыççăн участниксене тăтăшах спорт ĕçне хутшăнтарса пымалла. Физкультурăна, сывлăха тĕреклетнипе пĕрлех, массăна воспитани паракан метод выранне шутламалла. Уйрăмăнах çамрăк ачасемпе хĕр ачасене тата шкул ачисене спорт ĕçне анлăн явăçтармалла.

Вĕренÿ çулĕ пĕтнĕ хыççăн шкул ачисем каникула саланчĕç. Халĕ профсоюзпа комсомолăн, физкультурăпа çутĕç органĕсен, çамрăк ăрăва усăллă канма пулăшмалла. Хĕллехи вăхăтра шкулсенче çарпа физкультура тĕлĕшпе строевой занятисем туса ирттернĕ пулсан, çу вăхăтĕнче урăх тĕрлĕ спорт тумалла. «Трудовые резервы», «Смена» физкультура обществисем ачасен чи çывăх тусĕсем пулмалла.

Çуллахи спорт сезонĕ хĕрсе пырать. Малашне тата ăмăртусем пулса иртмелле. Çамрăк хĕрсемпе ачасен мастерлăхне, совет спорчĕн чапне татах та ытларах ÿстерер.

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Калинин юлташăн „Могущество Советского государства" ятлă кĕнекине пичетлесе кăларнă

Политика литератури кăларакан государство издательстви М. И. Калининăн «Могущество Советского государства» ятлă кĕнекине пичетлесе кăларнă. Ăна 100.000 экземпляр пичетленĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автотранспорт управленийĕн Транспортпа экспедици контори Шупашкартан Канаш еннелле тата Етĕрне еннелле яма организацисемпе предприятисенчен тата учрежденисенчен грузсем йышăнать. 5 кун хушшинче çитерсе парать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 39. Автотэк. Тел. 1—61.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: эксплоатаци отделĕн начальникĕ, технически отделăн начальникĕ, кадрсен отделĕн начальникĕ, главнăй бухгалтер заместителĕ, бухгалтр-ревизор тата диспетчер.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом Советов, ком. 317.

2—1.

Госбанкăн Чăваш Республикинчи конторине шут ĕçне пĕлекен тĕрлĕ квалификациллĕ работниксем ялан ĕçлеме те, вăхăтлăха ĕçлеме те кирлĕ. Кунсăр пуçне шут ĕçне пĕчченшерĕн вĕренме учениксене йышăнаççĕ. Икĕ уйăх вĕренмелле. Ĕç укçи 250 тенкĕ. Столовăй пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чувашская Контора Госбанка, отдел кадров.

2—1.

Автодор мехпаркне ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: материальнăй часăн бухгалтерĕ, счетовод-кассир, секретарь-машинистка, слесарьсем, токарьсем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 88.

Шупашкарти энергетика техникумĕ 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш курссене техник-дизелист, техник-теплотехник, техник-строитель пулма вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникумра 4 çул вĕренмелле.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнисене илеççĕ.

1-мĕш курса туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ. 1942-43-мĕш тата 1943-44-мĕш вĕренÿ çулĕсенче отличнo вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ. Ыттисен вырăс чĕлхипе, математикăпа тата СССР Конституцийĕпе испытани тытмалла.

2-мĕш курса вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене испытанисĕр илеççĕ, анчах та вĕсен вара кайран энергетика техникумĕн 1-мĕш курсĕнче вĕреннĕ техника дисциплинисемпе экзамен памалла пулать, çак техникум йышши ытти техникумсен студенчĕсене те испытанисĕрех илеççĕ.

3-мĕш курса çавăн йышши ытти техникумсен 3-мĕш курсĕнче вĕреннĕ студентсене, мĕншĕн те пулсан техникумран вĕренсе тухайманнисене, илеççĕ.

Пĕлÿ çитменнисене техникума кĕме хатĕрлекен курс уçăлать, унта укçасăрах вĕрентеççĕ.

Шупашкарти Стройтехникумра вĕреннĕ студентсене, унтан мĕншĕн те пулсан вĕренсе тухайманнисене, ятарласа тăвакан группăсене вĕренме килме чĕнеççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Плеханова, 7.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: а) автобиографи, б) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, в) ăçта, хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство.

Вĕренме кĕмелли испытанисем августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен пыраççĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче вĕренме тытăнаççĕ.

Вĕренме илнисене стипенди параççĕ, общежитисене вырнаçтараççĕ, выртса тăмалли вырăнсем параççĕ, вĕсем валли столовăй пулать.

3-мĕшпе 4-мĕш курссенче вĕренекен студентсене вĕреннĕ вăхăтра Хĕрлĕ Çара илмеççĕ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июнĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех

«ПОД ЗВУКИ ДОМБР»

ятлă музыкăллă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:

12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ агрономипе зоотехника факультечĕсен 1-мĕш курсне вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Института вăтам шкултан вĕренсе тухнă çынсене — физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературăпа испытани лайăх тытнисене илеççĕ. 1943—44-мĕш çулсенче вăтам шкултан отличник пулса вĕренсе тухнисене института испытанисĕрех илеççĕ.

Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Вĕренме кĕмелли испытанисем сентябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан свидетельство тата автобиографи.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Сельхозинститут, в приемную комиссию.

3—1.

Россглаввинон Шупашкарти эрех комбинатне ялан ĕçлеме химик-лаборант тата инженер-строитель кирлĕ. Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная слобода, 2Г, Россглаввино.

СССР Совнаркомĕ 1940 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă 2497 номерлĕ постановлени тăрăх, июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 15-мĕшне çитиччен пăшаллă сунарçăсене тепĕр хут çырса тухаççĕ.

Районсемпе хуласенчи сунарçăсене-промысловиксене «Заготживсырье» конторисем çыраççĕ, сунарçăсене-любительсене физкультурăпа спорт комитечĕсем çыраççĕ.

Хăйсен яка кĕпçеллĕ пăшалĕсене пырса çыртарман сунарçăсене ответ тыттараççĕ.

«Заготживсырье» Чăваш Контори

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00219 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.